

# ĂСТАЛĂХ

*(Элли Юрьев художник ĕçĕ-хĕлĕ пирки)*

Леонид АГАКОВ,
Чăваш АССР халăх писателĕ,
искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ

Чăваш художникĕсен Союзĕ юлашки çулталăк-çулталăк çурă хушшинче чылай выставкăсем туса ирттерчĕ. Вĕсем пĕрин хыççăн тепри, умлăн-хыçлăнах пулса пычĕç. Малтан—Совет Çарĕ фашистла Германие çĕнтернĕренпе 30 çул çитнĕ ятпа йĕркеленĕ выставка пулчĕ, унтан портретсен выставки. çамрăк художниксен выставкисем (вĕсем ĕнтĕ иккĕ-виççĕ те пулчĕç), каярахпа—Совет Союзĕнчи Коммунистсен Партийĕн XXV-мĕш съезчĕ ячĕпе тĕплĕн хатĕрленсе, «Ĕçе — мухтав!» — девизпа ирттернĕ выставка, уйрăм художниксен—Н. Сверчков, Н. Карачарсков, Ф. Быков пултарулăхĕсене анлăн кăтартакан выставкисем пулса иртрĕç.

Çак пур выставкăсене те курма халăх нумай çÿрерĕ. куракансем хушшинче хулари тата республикăри ĕçсыннисем—рабочисемпе колхозниксем те, предприятисенчи инженерсемпе техниксем те, тĕрлĕ учрежденисенче ĕçлекенсем те, студентсемпе профессорсем те, литературăпа искусство çыннисем те йышлă пулнă. Атăл тăрăх канса çÿренĕ май Шупашкарта чарăнса тăнă туристсем те нумай кĕре-кĕре курнă пирĕн художниксен ĕçĕсене, курнă хыççăн хăйсен шухăш-кăмăлне çырса хăварнă, ăнăçлă пулса тухнă произведенисемшĕн тав тунă, малашне тата пысăкрах ÿсĕмсем тума ыр суннă...

Нумай пулмасть эпĕ пĕр журналта СССР Художество Академийĕн действительнăй членĕ, РСФСР халăх художникĕ, РСФСРти художниксен Союзĕн правлени председателĕ Г. Коржев çырнă «Халăх синчен, халăх валли» ятлă статьяна вуларăм. Ку статьяна автор КПСС XXV съезчĕ умĕн усăлнă «Советская Россия» выставка пирки çырнă. Çав выставкăра РСФСРти нумай-нумай художниксен тĕрлĕ жанрпа тунă чи лайăх ĕçĕсене (живопись, графика, скульптура т. ыт.) кăтартнă.

Российăри художниксем тăххăрмĕш пилĕкçуллăхра пысăк ÿсĕмсем тунине, пуринчен малтан хамăр вăхăтри. паянхи пattăрсен сăнарĕсене. вĕсен чаплă ĕçĕсене. пурнăçне кăтартма тăрăшнине ырланă май. Г. Коржев уйрăмах çапла каланă: «Пирĕн Федерацие кĕрекен автономиллĕ республикăсемпе облаçсен искусстви... ку хушăра пысăк утăмсем туса нумай мала кайрĕ...»

Çак сăмахсем, паллах, пирĕн чăваш художникĕсене те тивеççĕ. Партин XXV съезчĕ умĕн усăлнă «Советская «Россия» выставкăра вĕсен ĕçĕсем те пулнă, вĕсенчен хăшĕ-пĕрисене пысăка хурса хакланă!

Шупашкарта эпĕ хĕрĕх çула яхăн пурăнатăп, чăвашсен пур паллă художникĕсемпе те сывăх паллашнă, вĕсен мастерскойĕсенче пулнă. Художниксем ирттерекен пур выставкăсене те курнă, теме пулать. Хăшпĕр художниксен ĕçĕсем çинчен, хам пултарнă таран, хаçат-журналсенче статьясемпе очерксем çырнă. Иртнĕ вăхăтри, калăпăр, 1930—1940 çулсенчи выставкăсене аса илетĕп те... вĕсене хальхисемпе нимпе те танлаштарма çук çав! Чи малтан—вĕсен тематики, социаллă содержанийĕ енĕпе танлаштарма çук. Пурнăç улшăнса, çĕнелсе, нумай енлĕ пулса пынă май, пирĕн çынсен ĕçĕ-хĕлĕ тĕпренех улшăннă май, художниксен ĕçĕн содержанийĕ те улшăнчĕ, çĕнелчĕ, малалла кайрĕ. Çакă пире чун-чĕререн савăнтарать.

Вăтăр-хĕрĕх çул каялла эпир халхи художник-ветерансене — М. С. Спиридонова, Н. К. Сверчкова, Ю. А. Зайцева çеç пĕлеттĕмĕр. Унтанпа пултаруллă чăваш çамрăкĕсем хушшинчен нумай художниксем ÿссе çитĕнчĕç, вĕсем живопиçре те. графикăра та, скульптурăра та, прикладной искусствăра та ăнăçлă ĕçлеççĕ.

Акă, кăçалхи майпа июнь уйăхĕсенче Шупашкарти художество галерейинче Элли Юрьев художникăн живописпе графика выставки питĕ ăнăçлă иртрĕ.

Тĕрлĕ сăлтавсене пула, эпĕ ку выставкăна малтанхи кунсенчех кайса курайманрăм, пĕр эрне пек иртсен тин çитсе курма тÿр килчĕ.

Çав эрне хушшинче выставкăра çынсем пит нумай пулнă иккен—куна эпĕ «Отзывсен кĕнекине» алла тытса уçкаласанах пĕлтĕм. Кам пулман унта, кам çырса хăварман хăй курнă произведенисем пирки! Хăшпĕр йĕркесем айне вуншарăн та çирĕмшерĕн ал пуснă — тĕрлĕ аслă шкулсенчи студентсем, районсенчи шкулсенчен килнĕ учительсем вĕсен вĕренекенĕсем, инженерсем, пенсионерсем, запасри офицерсем, писательсемпе поэтсем... Пурте ырлаççĕ художник ĕçĕсене, малашне те çакнашкалах пултаруллă пулма, халăха лайăхран лайăх произведенисем пама ыр сунаççĕ.

Темиçе сĕр çын ăшă кăмăлпа çырса хăварнă çакăн пек!

Пырса курнă çынсенчен нумайăшне ку выставка килĕшнĕ çеç мар. питĕ тĕлĕнтернĕ. Вĕсем мĕншĕн тĕлĕнни çинчен каярахпа калăп-ха.

Малтан манăн çак выставкăри произведенисен авторĕ çинчен калас килет пăртак.

* * *

Элли Юрьев 1936 çулта хальхи Красноармейски районĕнчи Кĕçĕн Шетмĕре çуралнă. Унăн ашшĕ Михаил Иванович Юрьев—учитель, шкул заведующийĕ пулнă. Вăл литературăна юратнă, сăвăсем, очерксем, пĕчĕк пьесăсем çырнă. Каярахпа Шупашкара куçса килсе хаçат редакцийĕнче ĕçлеме тытăннă, паллă журналист пулса тăнă. çав вăхăтрах чăваш литераторĕсен пурнăçĕпе ĕçĕсем синчен пит нумай материал пухса пынă та, 1964 çулта «Чувашские писатели» ятлă биографипе библиографи справочникĕ кăларнă. 1968 çулта, çĕнĕ материалсем пухса, вăл «Чăваш писателĕсем» ятлă кĕнеке—хальхинче чăвашла — кăларчĕ. 1975 çулта литературăна çĕнĕ ятсем нумай хутшăннине кăтартса, «Писатели Советской Чувашии» ятлă кĕнеке туса кăларчĕ. Питĕ кирлĕ, пархатарлă ĕç тунă вăл чăваш вулаканĕсемшĕн, литературăна юратакансемшĕн.

Кам пĕлет, тен, ашшĕ литературăпа искусствăна юратакан çын пулнăран унăн иккĕмĕш ывăлĕ, Элли, пĕчĕклех искусство еннелле туртăннă? (Ячĕ пирки—ун пек ят ниçта та çук-çке!—Юрьевсем çапла ăнлантарса параççĕ: авалхи чăвашсем хăйсен юратнă ĕç ăстисене, маçтăрсене «элли» тенĕ имĕш. Михаил Ивановичăн та хăйĕн ывăлне ăслă, хастарлă, ĕçре питĕ ăста çын тăвас килнĕ...)

Ÿкерчĕксем тума Элли алла кăранташ тытакан пулсанах пуçланă. Малтан кĕнекесем çинчен ÿкерсе илнĕ. унтан таврари пурнăçра мĕн курнине те, хăй шухăшласа туйнине те ÿкернĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче хут çукчĕ, эп вара ăçта мĕнле кив хут татки тупăнать—çавăн çине ÿкереттĕм,—кăмăллăн кулса аса илет халь Элли Михайлович.—Ÿкерчĕксем тумасăр пĕр кун та иртмен пуль...

Пулас художникĕн ача чухнехи çулĕсем пуринчен ытла Çирĕклĕре, аслашшĕн ялĕнче иртнĕ. Унта вăл çутçанталăк илемне курнă, унтах тăван чĕлхене юратакан пулнă, ялти тантăшсемпе выляннă, шыва кĕнĕ, вылăхсем пăхнă, алла лекнĕ кĕнекесене кăçса кайса вуланă. Ĕмĕрлĕхех асра юлнă Çирĕклĕ ялĕ, ахальтен мар унăн отчетлă выставкинче, ытти картинăсем хушшинче, «Манăн тăван ялăм Çирĕклĕ» тесе ят панă питĕ паха ÿкерчĕксен ярăмĕ паллă вырăн йышăннă...

Ашшĕ вăрçăран таврăнса хаçатра ĕçлеме тытăнсан, Юрьевсем пĕтĕм килйышĕпех Шупашкара куçса килнĕ. Элли хулари пĕртенпĕр чăваш шкулĕнче вĕреннĕ. Малтанхи пекех, ÿкерчĕксем тума юратнă. Çавна кура, ăна художество училищине вĕренме илнĕ, анчах пĕр-ик çул вĕреннĕ хыççăн унтан тухса кайма тÿр килнĕ—Элли вĕренме пултарайманшăн мар, урăх сăлтавсемпе. Вăл вара каллех вăтам шкула таврăннă та, 1955 çулта унтан вĕренсе тухса, çав çулах Совет Çарне кайнă. Унăн çар служби Грузире, Тбилиси хулинче иртнĕ.

Çамрăк салтак Элли Юрьев ÿкерчĕксем тума ăста пулнине кура, ăна часах çар чаçĕн клубĕнче ĕçлеттерме йышăннă, унта вăл тем те тунă: плакатсем, лозунгсем, аншлагсем çырнă, стена хаçачĕсене илемлетнĕ. Ку çеç те мар: клуб валли, казармăсем валли паллă художниксем ÿкернĕ картинăсен кописене тунă. Чаçь командирĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ, салтак-художник чăнах та пултаруллă пулнине курса, ăна Тбилисири офицерсен Çурчĕ çумĕнчи çар художникĕсен студине вырнаçтарнă. Ку вара Эллие калама та çук хавхалантарнă...

Студи Тбилисири Художество Академийĕ çумĕнче ĕçленĕ, вĕрентекенĕсем, ертсе пыраканĕсем Академи преподавателĕсемех пулнă. Икĕ çул—эрнере тăватă хут. каç-каç, вĕренме çÿренĕ Элли çав студие. Ĕçсем ăна пынă, çамрăк художникăн ăсталăхĕ ÿснĕçемĕн ÿснĕ. Çар службин срокĕ тухсан вара вăл Тбилисири Художество Академине, живопиç факультетне экзамен панă та чиперех Академи студенчĕ пулса тăнă. Малашнехи вара пĕтĕмпех хăй тăрăшнинчен килнĕ.

Эпĕ Эллипе 1962 çулхи çулла паллашрăм. Ун чухне эпĕ икĕ уйăхра пĕрре тухакан «Тăван Атăл» альманахăн редакторĕччĕ. Альманаха вулакансен кăмăлне каякан, вĕсем юратакан, халăх хушшине ытларах сарăлакан тăвас тесе, эпир унăн содержанине çеç мар, тулаш енне те лайăхлатас, илемлетес тесе тăрăшаттăмăр. Анчах пире журнал валли лайăх ÿкерчĕксем тума пултаракан художник-графиксем çукки хуплатчĕ. Кама май килнĕ — çавна тутараттăмăр альманах хуплашкине те, шалти ÿкерчĕксене те.

Пĕррехинче пирĕн редакцие хура куçлăхлă çамрăк çын пырса кĕчĕ те, паллашнă-паллашман пирĕн альманаха начар илемлетни çинчен калаçма тапратрĕ. Йăлтах тĕрĕс каларĕ, эп ун сăмахĕсене ним пÿлмесĕр итлерĕм, унтан ыйтрăм:

— Эсĕ ху кам вара? Художник-и?

— Художниксен пулса çитеймен те-ха, пулма ĕмĕтленетĕп,—йăл кулса илчĕ вăл.—Тбилисири Художество Академийĕнче вĕренетĕп, халь, çуллахи каникул вăхăтĕнче, кĕнеке издательствинче художествăлла редактор вырăнĕнче ĕçлетĕп. Юрьев ман хушамат.

